## Районăмăр маттур çыннисемпе пуян

# «Кун-çулăм куç умĕнчех»

**Мартăн 23-мĕшĕнче Муркаш комсомол райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ, Муркашра пурăнакан Ф.А. Григорьева 90 çул тултарчĕ. Çав ятпа ăна район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Н.П. Петрова, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин саламларĕç.**



– Килĕрех, килĕр, – тăпăлтăпăл та тирпейлĕ йывăç пӳрт алăкне уçрĕ Федосия Артемьевна.

Унтан çамрăк çын пек çăмăл утăпа тĕпеле утса кайрĕ. Кам калатăр ăна ĕнер 90 çул тултарнă тесе?

– Эсир пирĕн района йĕркелекенĕсенчен пĕри пулнă. Сирĕн пултарулăхăрпа, эсир тунă ĕçсемпе эпир яланах мухтанатпăр. Тавах Сире пархатарлă ĕçĕршĕн, – терĕ район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов Федосия Артемьевнана юбилей ячĕпе саламласа. – Ырă сывлăхпа тата нумай-нумай çул савăнса пурăнмалла пултăр. Юрий Александрович юбиляра Тав çырăвĕ, парне пачĕ.

Района йĕркеленĕ вăхăта, хаяр вăрçă çулĕсене вара юбиляр хăй çапла аса илет.

– Пирĕн çемьере арçын ача пулман. Çавăнпа та 1943 çулта повестка парсан, тӳрех çапла шутларăм: манăн вăрçа кайма ят тухрĕ. Ун чухне вăл Çатракасси шкулĕнче 6 çул ачасене вĕрентетчĕ ĕнтĕ.

Урăх нимĕнле шухăш та пырса кĕмен пуçа. Ку вăхăта шăпах вăл Çатракассинчи шкулта пуçламăш классене вĕрентекенскер, вăрçăри медсестрасен курсне пĕтернĕччĕ ĕнтĕ.

Ашшĕ ăна лашапа леçсе хăварчĕ. Вăрçа ямарĕç ăна. Çар ĕç комиссариатĕнче ăна парти обкомне каймаллине пĕлтерчĕç.

– Вĕреннĕ çынсем тылра та кирлĕ.

Çак сăмахсемпе хĕре Мăн Сĕнтĕр районĕн комсомол райкомĕн 2 секретарьне ĕçлеме ячĕç. 9 уйăх ĕçлерĕ кунта. Декабрь уйăхĕнче вара ăна кĕçех Муркаш районĕ йĕркеленесси, унăн унта комсомол райкомĕн 1 секретарьне ĕçлеме каймалли пирки пĕлтереççĕ.

– Парти райкомĕн 1 секретарĕ ун чух В.И. Ильин, райĕçтăвком председателĕ Г.Ф. Федоров пулнăччĕ. Пĕрле йывăр лава туртма пуçларăмăр.

Паянхи пекех лайăх астăвать çав çулсене Федосия Артемьевна. Вырăнсене тухса ларусем ирттернĕ, эрни-эрнипе ялсене тухса çӳренĕ. Мĕнле йывăр пулсан та нăйкăшман. Республикипе 15 çынна чуна парса ĕçленĕшĕн 500-шер тенкĕ преми пачĕç. Вĕсен шутĕнче Ф.А. Григорьева та пулчĕ.

– Ун чух çемьеленме ĕлкĕреймен. Мĕн тăвас ку укçапа?

Социаллă хӳтлĕх пайне кайса парать çав укçана:

– Ача çуртне куçарăр, – тет.

Унăн укçипе тăлăх ачасене фуфайкăсем илсе панине пĕлсен çав тери савăнать.

Ачаранах хастарччĕ çав вăл. Муркашра шкул тунă çул вăл 10 çултаччĕ. Ашшĕпе амăшĕ те, вищĕ аппăшĕ те пĕр саспалли те пĕлмен. Вăл вара хăех шкулта вĕренме тĕв тăвать.

10 класран 8 хĕр ача, 8 арçын ача вĕренсе тухаççĕ вĕсем.

Ачаранах урамра учителле выляканскер, тӳрех Çĕрпӳри педучилищĕне вĕренме каять. Ĕç биографийĕ Ишек ял Советне кĕрекен Хура çырма ялĕнче пуçланать. 1938 çулта вара Çатракасси шкулне куçать. Вăрçă вăхăтĕнче колхозниксемпе пĕрле Мускав – Хусан çула тунă çĕрте бригадирта та ĕçлет, вăрмана сахал кайнă-и вутă касма. Аслăрах ăрури çынсем астăваççĕ пулĕха Чăвашрадиопа «вутă касрăмăр, тирпейлерĕмĕр» текен уçă сасăпа передача ярăмĕ пуçланнине. Шăпах Федосия Артемьевнан сассине çырса илнĕ çав вăхăтра. Вăл колхоз столовăйĕнче те ĕçленĕ.

Шăпа вара вăрçă хыççăн хăех алăкран шаккать. Муркашра пурăнакан Меркурий Григорьев хăйне мăшăр пулма ыйтсан, хирĕçлемест. 5 ача çуратса пурнăç çулĕ çине кăларчĕç вĕсем. Мăшăрĕ 1988 çулта 79-та çĕре кĕчĕ. Шел, кăçал Федосия Артемьевнан ывăлĕ, йĕкĕрешсенчен пĕри, пурнăçран уйрăлса кайрĕ. 4 хĕрĕнчен йĕкĕрешсенчен пĕри, аслă хĕрĕ Галя, Шупашкарта пурăнать, час-час килет амăшĕ патне.

Федосия Артемьевна Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ. Пултарулăхне кура 1946 çулта ăна парти райкомне куçарчĕç ĕçлеме. Анчах чĕри юратнă ĕçшĕн тунсăхларĕ. Парти ĕçĕнчен ярасшăн пулмарĕç пулин те, Федосия Артемьевна хăйне шкула куçарма ыйтрĕ. Çапла майпа Муркаш шкулĕнче пуçламăш классене вĕрентме пуçларĕ. Мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччenex уйрăлмарĕ юратнă ĕçрен. Ача амăшĕн медалĕ, тĕрлĕ шайри Хисеп грамотисем мĕн чухлĕ пулĕ.

Пурнăçри чи телейлĕ самант хăшĕ-ши? – тесе ыйтсан, юбиляр çапла хуравларĕ:

– Эпĕ 5 ача амăшĕ пулни.

Кунта çапла хушса каламалли кăна юлать. Федосия Артемьевна пек ырă чун-чĕреллĕ пуласчĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: юбиляра саламлană самант.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Çара каяс текенсем валли

# *Çĕршыва хӳтĕлеме*

Юлашки çулсенче çар ĕçĕнче лайăх улшăнусем нумай пулса иртрĕç. Контрактпа çара каякансенчен никам та тĕлĕнмест ĕнтĕ. Вĕсене ытларах хисеплеççĕ çеç.

Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариачĕ 35 çула çитмен арçынсене йыхравлать:

– Прапорщиксен шкулне вĕренме (салтаксемпе сержантсен аслă е ятарлă вăтам пĕлӳ тата çар опычĕпе ĕç стажĕ пулмалла). 5 уйăх çурă вĕренмелле, вĕренӳ кашни çулах июнĕн 1-мĕшĕнче тата декабрĕн 1-мĕшĕнче пуçланать.

– Кĕçĕн прапорщиксене вĕрентсе хатĕрлекен курссенче (салтаксемпе сержантсен аслă е ятарлă вăтам пĕлӳ тата çар опычĕпе ĕç стажĕ пулмалла). Вĕренсе пĕтернĕ хыççăн «кĕçĕн лейтенант» звани параççĕ. 10 уйăх вĕренмелле, вĕренӳ сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçланать.

– Контрактпа Атăлçи–Урал çар округне запаса тухнă офицерсенчен рота (батарея) командирĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумне илеççĕ («аслă лейтенант» звани, 12 разрядлă тариф).

Çар часĕ Оренбург облаçĕнчи Тоцкое поселокĕнче вырнаçнă.

1. Офицерсем 2008 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне уйăхра 14.916 тенкĕ илеççĕ.

2. Кунсăр пуçне:

– çар тивĕçне лайăх пурнăçланăшăн кварталта пĕрре 3 оклад чухлĕ преми параççĕ;

– çулталăк итогĕсене пăхса 3 оклад чухлĕ укçан тӳлеççĕ;

– санаторисенче сипленме çарта тăракана 6 чи пĕчĕк ĕç укçи чуçлĕ, унăн çемйинчи ытти çынсене 3 чи пĕчĕк ĕç укçи чухлĕ компенсаци параççĕ;

– 2 оклад чухлĕ пулăшупа укçан тивĕçтереççĕ;

– нумай ĕçленĕшĕн пенси тӳлеççĕ (выслуга) тата ытти енсемпе пулăшаççĕ.

Çемьеллĕ офицерсене хăтлă хваттерсем, авланманнисене общежитинче вырăн параççĕ.

Пĕрремĕш хут контрактпа çара пынă офицерсемпе прапорщиксене çар çыннисене çурт-йĕрпе тивĕçтермелли списока кĕртеççĕ.

Çарти арçынсен арăмĕсене те ĕç вырăнĕсем тупса пама пултараççĕ. Садик, шкул, сывлăха сыхламалли учрежденисем те пур.

Ыйтусемпе Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариатне пыма сĕнетпĕр: Муркаш ялĕ, Гагарин урамĕ, 10 çурт. Тел:. 8-835-41-(2-13-84, 2-13-50, 2-17-01).

**В. АНДРЕЕВ,**

**Муркаш тата Элĕк çар комиссариачĕн пай пуçлăхĕн аслă пулăшаканĕ.**

## Ырă ĕçсен çулталăкĕнче

# *Пулăшма ӳркенсе тăмасть*

Пурнăç урапи пурин те пĕр пек кусмасть. Пĕрисен вăл пуçламăш кунран тытăнсах япăх мар йĕркеленсе пырать, теприсен вара телей тени кая юлса килет.

Валентина Егоровнапа Александр Димитриевич Дмитриевсем 1975 çулта пĕрлешеççĕ, çемьеллĕ пурнăçпа пурăнма тытăнаççĕ. Вĕсен вищĕ ача çуралать. Асли Нина куçăмсăр меллпе вĕренсе тухса бухгалтер-экономист профессине алла илет, пĕр организацире ĕçлеме тытăнать.

Анчах амăшĕ вăхăтсăр çĕре кĕрет. Кукамăшĕ те арантарах çӳрет. Çавна курса кӳршĕре пурăнакан Галина Анатольевна Иванова вĕсене хуçалăхра май пур таран пулăшма тăрăшать. Пĕчĕк ачасен шăпи ăна та канăç памасть. Ĕнине те суса парать, алси-чăлхине те çыхать.

Çуллахи вăхăтра вара пускилти Ивановсем – Юрăпа Галина – утă çулса пуçтарма та, çĕр улми кăларса пухма та пулăшма ӳркенсе тăмаççĕ.

Пушă вăхăтра юрлама-ташлама ăста Ивановсем. Нумай пулмасть Хорнуй клубĕ çумĕнчи пултарулăх ушкăнĕпе смотр-конкурса та хутшăнчĕç. Иртнĕ уйăхра 3 концерт йĕркелеме пултартăмăр.

Пускил лайăх пулсан хура çĕр çийĕн те кимĕ шăвать тесе ахальтен каламан ĕнтĕ ватă çынсем.

**З. КУПЦОВА,**

**Хорнуй клубĕн ертӳçи.**

## Спорт хыпарĕсем

# ОМОНовецсем юлташĕсене манмаççĕ

Мартăн 29-мĕшĕнче Москакасси ял тăрăхĕнче хамăр ентеше, ОМОН çар çыннине – 10 çул каялла Дагестанра çар заданине пурнăçланă чух вилнĕ Г.Е. Кудькова асăнса волейбол енĕпе ăмăрту иртнĕ. 7 команда хутшăннă унта. Çивĕч кĕрешӳре 1-мĕш вырăна хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕн команди тивĕçнĕ. 2-мĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Муркашри сĕт-çу завочĕн тата чикĕллĕ яваплăхлă «ДОЦ» общество командисем çĕнсе илнĕ. Призерсене дипломсемпе хаклă парнесем панă.

# Шашкăлла выляссипе

Апрелĕн 6-мĕшĕнче район администрацийĕн методика кабинетĕнче ĕç çыннисен спартакиади шучĕпе шашкăлла выляссипе ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисен, учреждениесен тата ял тăрăхĕсен командисем вăй виçеççĕ. Ăмăрту 10 сехетре пуçланать. Командăра 1 представитель тата 3 арçынпа 1 хĕрарăм пулмалла. Призлă вырăн йышăннă командăсене дипломсем, уйрăм участниксем хушшинче мала тухнисене Хисеп грамотисем тата парнесем параççĕ.

# Сĕтел çи теннисĕ енĕпе

Апрелĕн 6-мĕшĕнчех сĕтел çи теннисĕ енĕпе те Муркаш шкулĕнче ăмăртусем иртеççĕ, 12 сехетре пуçланаççĕ. Ăмăртусем ĕç çыннисен спартакиади шучĕпе ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисен, учреждениесен тата ял тăрăхĕсен командисем хушшинче иртеççĕ. Командăра 1 представитель тата 2 арçынпа 1 хĕрарăм пулмалла. 1–3-мĕш вырăн йышăннă командăсене дипломсем, призлă вырăн йышăннă уйрăм участниксене Хисеп грамотисемпе парнесем кĕтеççĕ.

**Хамăр инф.**

## *Пĕлтерӳсем. Объявления*

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:07 05 01:0117, местоположение: участок находится примерно в 430 м по направлению на юг от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, ул. Ториково, д. 7, площадью 5115 кв. м.**

**Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:07 09 01:0477, местоположение: участок находится примерно в 700 м по направлению на северо-восток от ориентира здание школы, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Сятракасы, ул. Школьная, д. 17, площадью 6100 кв. м.**

**Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.**

**Участник долевой собственности Семенов Федот Тимофеевич, 02.03.1934 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Лапкасы, ул. Мира, д. 24, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения на территории землепользования СПК «Оринино» в поле № 5, полевой севооборот № 1 площадью 1,46 га (пашни).**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**

**1. Администрации Орининского сельского поселения.**

**2. Семенову Федоту Тимофеевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Лапкасы, ул. Мира, д. 24.**

**3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.**

**Продается трактор МТЗ-80. Цена договорная. Тел.: 8-905-343-58-02.**

**Продается четырехкомнатная квартира в центре с. Моргауши площадью 81,3 кв.м. Обращаться по тел.: 8-927-847-85-59, 8-909-302-68-58.**

**КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения, выдает займы. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41. 9-20.**

**Спутниковые антенны *ТРИКОЛОР* с установкой, регистрацией и обслуживание. Тел.: 8-905-345-77-19.** 4-6.

**Предприятию для работы в Чувашской Республике требуются машинисты автогрейдера, катка, экскаватора; бульдозеристы. Зарплата от 18 тыс. рублей. Тел.: (8352)69-43-85. 2-8.**

**Продаю однокомнатную квартиру 32 кв. м. в центре с. Моргауши. Тел.: 8-927-857-50-36 в любое время. 2-2.**

**Продаем керамзитобетонные блоки, цемент, 1 тонна 6500 руб., шифер, рубероид. Тел.: 8-960-307-41-78, 8-927-862-27-02. 1-3.**

**Тăвату хут пăрулана хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Ситуккасси ялĕ. Тел.: 8-909-302-86-03, 8-927-853-28-66.**

**Удостоверение ветерана боевых действий, выданный Министерством внутренних дел РФ 27 октября 2005 года № 054110 серия ВВ на имя Колесникова Андрея Алексеевича, прошу считать недействительным.**




Муркаш район администрацийĕ республикипе паллă ентеш

**Леонид Хрисанфович МИХАЙЛОВ**

вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Отдел образования, молодежной политики, физической культуры и спорта администрации Моргаушского района и совет Моргаушской районной организации профсоюза работников народного образования выражают глубокое соболезнование по поводу кончины ветерана педагогического труда, бывшего директора Кубасинской восьмилетней школы

**МАТЮКОВОЙ Розы Лазаревны.**

**Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
**АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.**
**ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38. Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru**

**Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.**
**Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.**

**Объем 1 усл. печатный лист.**
**Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.**
**Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.**

**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**
**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Дежурный по номеру Шапошников В.Л.**
**Номер подписан 01.04.2008 г.**
**Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3637.**

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.